И.Я. Яковлев алфавичӗ

Паллах, сас паллиллӗ ҫыру И.Я. Яковлев алфавичӗччен 100 ҫул маларах та пулнӑ, анчах анлӑ сарӑлман тата чӑваш пуплевӗн сасӑ тытӑмне тӗрӗс палӑртайман. Тӗслӗхрен, Н.И. Золотницкий чӑвашла вулама вӗрентме тесе тӗллевлӗ хатӗрленӗ «Чуваш кнеге» букварьте, пӗрремӗшенчен, [ӑ, ӗ, ҫ] сасӑсене палӑртмалли ятарлӑ паллӑсем пулман, иккӗмӗшенчен, пӗр паллӑпах икӗ фонемӑна (сӑмахран, янравлӑх позицийнчи <к> тата < х > фонемӑсене **г** сас паллипе – *кагай, сагал*; танл.: *какай, сахал),* пӗр фонемӑнах пӗр ҫӗрте пӗр паллӑпа, тепӗр ҫӗрте тепӗр паллӑпа ***(ӳпле, нюре*** танл: ***ӳпле, нӳрӗ)*** палӑртнӑ. (*Петров Н.П.* Чӑваш ҫырулӑхӗ (Ҫӗнӗ ҫырулӑх пуҫланнине 100 ҫул ҫитнӗ май). – Шупашкар: Чӑваш кӗн. изд-ви, 1971. – С. 10–11.) Куна И.Я. Яковлев аван пӗлнӗ, ҫавӑнпа хӑй шухӑшне 1867 ҫулта ҫу уйӑхӗн уйӑхӗн 13-мӗшӗнче «Симбирские губернские ведомости» хаҫатра Н.И. Золотницкин "Сӧлдалык кнеге» хрестоматийӗ пирки ҫырнӑ резенцире пӗлтернӗ. (*Петров Н.П.* Асӑннӑ ӗҫ. – С. 14–15) Ҫак рецензие И.Я. Яковлев Н.И. Золотницкие ним ҫукран хирӗҫтерсе ярас тесе мар, чӑвашсем валли лайӑх ҫырулӑх тума вӑхӑт ҫитнине кӑтартас тесе ҫырнӑ. Чӑваша кӗнекеллӗ тӑвас ӗмӗт вара Иван Яковлевӑн 60-мӗш ҫулсен пуҫламӑшӗнчех тӗвӗленнӗ пулнӑ.

Ҫӗр виҫевҫин ӗҫӗпе кӗпӗрнесем тӑрӑх ҫӳренӗ май Иван Яковлев тӗрлӗ халӑх пурнӑҫӗпе паллашать. Ҫамрӑк ҫынна вырӑссемпе, поляксем тата тутарсем хӑйсен чӗлхипе кӗнеке-хаҫат вулани, ҫырма пултарни, анчах ҫакнашкал май чӑвашсен ҫукки шухӑша ярать. Пуҫа час-час килекен шухӑш, И.Я. Яковлев хай аса илнӗ тӑрӑх (*Яковлев И.Я.* Моя жизнь: Восоминания /Вступ. статья Л.П. Куракова, археогр. предисл. Г.Н. Плечова; примеч., имен. указ. Н.Г. Краснова. – М.: Республика, 1977. – С. 104 –107), 1864 ҫулта яша чӑвашсем валли ҫыру тӑвас пулать текен пӗтӗмлетӳ патне илсе пырать. Ку ӗмӗте пурнӑҫа кӗртме Хусан университечӗн студентне Иван Яковлева тӗрӗк чӗлхисене лайӑх чухлакан Николай Иванович Ильминский профессор хавхалантарать, ӑслӑлӑх енчен пулӑшать.

Иван Яковлева пулăшма Н.И. Ильминский темиçе çамрăка сĕнет. Вĕсенчен Иван Яковлев иккĕшне суйласа илет: Хусан университечĕн филологи факультетĕнче вĕренекен Василий Алексеевич Белилина тата Хусан кĕрешĕн тутар шкулĕнче вĕренекен Сергей Николаевич Тимрясова. В. Белилин вырăс пулнă, тăван чĕлхине лайăх пĕлнĕ, Н.И. Ильминский прфессор патĕнче турккăпа тутар чĕлхисене тĕпченĕ, арабла вĕреннĕ, тĕрлĕ чĕлхен сасă тытăмĕпе интересленнĕ, анатомипе сасă органĕсем çинчен лекцисем итленĕ, çавăнпа сасăсене калаçни тăрăхах уйăрса илме ăста пулнă. С. Тимрясов тутарсемпе ачаран тутарла калаçса ӳснĕ чăваш çамрăкĕ пулнă, Хусанта кĕрешĕн тутар шкулĕнче вĕренекенскер тутарла çырнине вуланă май тӳрех чăвашла куçарса пама пултарнă. (*Петров Н.П.* Чăваш çырулăхĕ…– С. 15–16.)

Н.П. Петров тĕпчевçĕ çырнă тăрăх, И. Яковлев, В. Белилин тата С. Тимрясов 1871 султа чăваш чĕлхин сассисене (фонемисене) палăртас тĕллевпе эксперимент пуçлаççĕ. Экспериментра чăваш сассисене вырăспа тутар чĕлхисен сассисемпе танлаштарса пăхаççĕ. Танлаштарма, тĕпрен илсен, диктант çырнă. С. Тимрясов тутартан чавашла куçарса каланине В. Белилин хут çине вырăс сас паллийĕсемпе хăй илтнĕ пек çырса пынă. Тутар кĕнекисене çамрăксем чăвашла темиçе эрне хушшинче куçарса пĕтереççĕ. Мĕн çырнине илсе Иван Яковлев çуллахи каникулта юлташĕсене хăйĕн тăван ялне Кăнна Кушкине илсе каять. Кунта каникулта хăй вăхăтĕнче Чĕмпĕр чăваш шкулĕн пĕрремĕш вĕренекенĕ пулнă çын – çав вăхăтра Чĕмпĕртен Чĕмпĕр уезд училищин педагогика курсĕнче вĕренекен Алексей Васильевич Рекеев та çитнĕ. И. Яковлев ертсе килнĕ ушкăн, А. Рекеев тата ытти çамрăксем В. Белилин çырнă текстсене вулама тытăнаççĕ те вĕсем уçăмсăр иккенне ăнланса илеççĕ. Çамрăк тепчевçĕсем халăхпа хутшăнса чĕрĕ пуплеве итлеççĕ, халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене пухаççĕ. В. Белилин чăвашсен калаçăвĕнче нимле позицирен килмен [ă, ĕ] сасăсем (хальхи терминологипе – «фонемăсем») пуррине тавçăрса илет. Çакă, Н.П. Петров чĕлхеçĕ çырнă тăрăх,

В. Белилин тунӑ пысӑк пӗлтерӗшлӗ открыти пулнӑ. (*Петров Н.П.* Чӑваш ҫырулӑхӗ…– С. 17.)

Ку шухӑш чӑн пулнине И. Яковлевпа В. Белилин тата тепӗр тапхӑр тӗрӗслеҫҫӗ те Н.И. Ильминские пӗлтереҫҫӗ. Ун патӗнче пӗтӗм эксперимент пирки пӗтӗмлетӳллӗ калаҫу пулса иртет. И.Я. Яковлевӑн тӑван енӗн калаҫӑвӗнче 8 уҫӑ сасӑ ([а, ӑ, ӗ, э, ы, и, у, ӳ]) 37 хупӑ сасӑ ([п, п′, б, б′, в, в′, к, к′, г, г, т, т′, т″, д, д′, д″, ш, ш′, ж, ж′, с, с′, з, з′, х, х′, ҕ, ҕ′, р, р′, й, л, л′, м, м′, н, н″]) пуррине йышӑнаҫҫӗ.

Сас паллисене тӑвасси И. Яковлевӑн ӗҫӗ пулса тӑрать. И. Яковлев чӑваш ҫырӑвне латин графикипе тӑвасшӑн пулнӑ, анчах вырӑссен алфавичӗпе ҫӗр ҫул усӑ курнин традицине пӑрахӑҫлас темест. Сӑмах май, малтанхи вӑхӑтра Иван Яковлев ту ен чӑвашӗсемпе анат енсем валли кӗнеке тавраш уйрӑммӑн кӑлармалла пуль тесе шухӑшланӑ, анчах, ку ҫул чӑвашсене уйӑрса ярасран, пурне те тивӗҫтерекен ҫыру тума пуҫӑнать. (*Петров Н.П.* О роли И.Я. Яковлева в нормализации лексики литературного языка // Вопросы чувашского языкознания: Сб. статей (на чуваш. яз.). – Чебоксары: Чуваш. гос. ин-т гуманит. наук, 1999. – С. 136 –137.) Алфавит 1871 ҫултах хатӗр пулать.

И.Я. Яковлевӑн пирайхи алфавичӗ акӑ вӑл:

Аа, Бб, Б′б′, Вв, В′в′, Гг, Г′г′, Ҕҕ, Ҕ′ҕ′, Дд, Д′д′, Д″д″, Ее, Жж, Ж′ж′, Зз, З′з′, Ии, Йй, Кк, К′к′, Лл, Л′л′, Мм, М′м′, Нн, Н′н′, Оо, Пп, П′п′, Рр, Р′р′, Сс, С′с′, Тт, Т′т′, Т″т″, Уу, Ӳӳ, Фф, Хх, Х′х′, Шш, Ш′ш′, Ъъ, Ьь, Ыы

Ку вариант 47 паллӑран тӑнӑ. Вӗсенчен 9-шне уҫӑ сасӑсене палӑртма, 38-шне хупӑ сасӑсене палӑртма тунӑ. Алфавитра ту ен чӑвашӗсен калаҫӑвне те шута илсе кӗртнӗ **о** тата **ф** сас паллисене те курма пулать. <Ч> фонемӑна анат ен чӑвашӗсем валли тесе илнӗ палла (**т**″) илнӗ.

Алфавит чи малтан 1872 ҫулта Хусанта И.Я. Яковлевӑн «Т″ъваш ад″изене сыръва вьренмелли кнеге» ятлӑ пирвайхи чӑваш букварӗнче пичетленсе тухнӑ. Ал ҫырӑвне пичете пама 1871 ҫулхи чӳк (ноябрь) уйӑхӗн 15 (27)-мӗшӗнче ҫирӗплетнӗ.

Алфавит ăнаçлах пулманни букварь ятĕнчех курăнать, мĕншĕн тесен вулама диакритика паллисем чăрмантараççĕ. Вĕсем тата пичет ĕçĕнче те меллĕ мар. Çитменнине, вырăс çырăвĕнчен сасса пĕлтермен **ъ, ь** паллăсене чăваш çырăвне илнин сăлтавĕ курăнмасть. Ку паллăсем сасăсене авалхи вырăс çырăвĕнче кăна пĕлтернĕ: **ъ** паллă [ă] сасăпа, **ь** паллă [ĕ] сасăпа тӳр килнĕ.

Усă курма мелсĕррине кура И.Я. Яковлев алфавитăн малтанхи вариантне пăрахăçлать те çĕннине тăвать. Хупă фонемăсен хытă тата çемçе, янравсăр тата янравлă варианчĕсем пуррине тата [ç] сасă уйрăм фонема тунине фонема теорине вуласа мар, практика мелĕпе ăнланса илет те И.Я. Яковлев алфавитăн 2-мĕш вариантне – 27 сас паллиллине тăвать:

Аа, Пп, Вв, Кк, Тт, Ťť, Ţţ, Ее, Шш, Сс, Çç, Ии, Jj, Лл, Љљ,

Мм, Нн, □□, Оо, Рр, Уу, Ӳӳ, ФФ, Хх, Ъъ, Ьь, Ыы

Ку алфавитпа И.Я.Яковлев 1872 çулта Хусанта «Çыръва вьренме тытънмалли кьнеке» ятлă букварь тата «Ţън тьн кьнеки» пичетлесе кăларать. Ъъ, Ьь паллăсем вырăнне **Аă, Еĕ** сас паллисем шухăшласа тупнă пулин те (*Петров Н.П.* Чăваш çырулăхĕ…– С. 22.) унччченхи паллăсене улăштармасть, мĕншĕн тесен, пирĕн шухăшпа, типографире тивĕçлĕ сас паллисем пулман.

1873 çулта тухнă «Букварь для чуваш с присоединением русской азбуки» ятлă виççĕмĕш букварьте И.Я. Яковлев алфавичĕн юлашки варианчĕ тухать. Унта пĕтĕмпе 25 сас палли. Вĕсем çакнашкал йĕркепе вырнаçнă:

Аа, Аа, Уу, Ыы, Ее, Ĕĕ, Ӳӳ, Ии, Йй, Лл, Љљ, Мм, Нн, □□,

Рр, Сс, Çç, Шш, Вв, Кк, Хх, Пп, Тт, Ťť, Ţţ

Ку варианта унччченхи **ъ, ь** паллăсем вырăнне **ă, ĕ** сас паллисене кĕртнĕ, латин çырулăхĕнчен илнĕ **Jj** сас паллисене пăрахăçласа пирвайхи вариантра усă курнă **й** сас палли патне таврăннă. **Ф** тата **о** сас паллисене кăларса пăрахнă. Сăмах май, сасса пĕлтермен паллăсем пулман пирки И.Я. Яковлев алфавичĕшĕн «сас палли» термин питĕ вырăнлă.

Ку алфавитпа чăваш шкулĕпе пичечĕ, ĕç хучĕ çыракансем ним улшăну кĕртмесĕр 60 çул хушши усă курнă. Хӳреллĕ паллăллисенчен **љ, □** сас

паллисемпе хытă сăмахра вырнаçнă <л′>тата < н′> фонемăсене палăртма, **т̧** сас паллипе кирек хаш позицире те <ч> фонемăна палăртмалла пулнă. Хӳреллĕ паллăпа хытă сăмахра уса курас пинципа тытса пырас пулсан <т′> фонемăна палăртма та хӳреллĕ **т̧** паллă кирлĕ пек, анчах И.Я. Яковлев хӳресĕр **т̆** сас паллине илнĕ. Пĕр евĕрлĕ виçĕ фонемăран иккĕшне хӳреллĕ паллăпа, теприне хӳресĕр паллăпа кăтартни вăл хирĕçӳлĕх паллах.

Мĕн тесен те, И.Я. Яковлев сĕннĕ сас паллисем кирек епле позицире те чăваш чĕлхин фонемисемпе тӳр килеççĕ. Н.И Золотницкий çырăвĕпе танлаштарсан И.Я. Яковлев çырăвĕнче пĕр фонемăна расна, расна фонемăна пĕрешкел палăртас йĕрке пулман темелле.

Енчен те вырăс чĕлхинчен йышăнакан сăмахсем йышĕпе 1917-мĕш çулчченхи шайра тăрса, чăваш фонема системине ватмасăр, ăна пăхăнса майĕпен кĕрсе пынă пулсан И.Я. Яковлев алфавичĕ нимле те улшăнас çукчĕ. Октябрь революцийĕ халăх пурнăçне нумай енчен улăштарать, вĕреннĕ çынсем вырăс чĕлхинчен (е ун урлă) йышăннă ăнлавсем валли чăвашла тӳр килӳсем тупма ĕлкĕреймеççĕ. Çитменнине, ют чĕлхе сăмахĕсен сасă тытăмĕ пирĕн сăмахсен тытăмĕпе килĕшсе тăман самантсем пур. Тĕслĕхрен, *парта* сăмахра вырăссем пĕр [т] уйăраççĕ пулсан чăвашсем икĕ [тт] илтеççĕ. *Пихта* сăмахра вара [т] вырăссемшĕн те, чăвашсемшĕн те пĕрешкел илтĕнет. Çырупа ĕçлекенсем янравлăх условийĕнче янраман хупă сасăсене икĕ хупă сас паллипе палăртса вырăс сăмахĕсене вырăслах çырас çул çине тăраççĕ. Çавна май И.Я. Яковлев алфавитне майĕпен вырăс сас паллийĕсене кĕртме тытăнаççĕ. Акă **о** сас паллине 1923 çулта, **ф** сас паллине 1926 çулта, **э, ю, я, щ, ъ, ь** паллăсене 1938 çулта, **ё** сас паллине 1949 султа кĕртнĕ. Хӳреллĕ **т̧** палла **ч** сас паллипе улăштарма 1926 çулта сĕннĕ, чылай тавлашнă хыççăн 1933 çулта хăйĕн яланхи вырăнĕнче çирĕплетнĕ. Хӳреллĕ **љ,** □ тата тăрăллă **т̆** сас паллисене 1938 çулта пăрахăçланă.

Алфавит 1923 çулта 26 сас паллиллĕ, 1926 çулта 27 сас паллиллĕ, 1933 çулта 33 сас паллиллĕ, 1938 çулта 36 сас паллиллĕ, 1949-51 çулсенче 37 сас

паллиллĕ пулса тăрать, урăх улшăнмасть. Алфавитăн паянхи йĕрки 1933 çулта çирĕпленет.

Алфавит улшăнăвĕ орфографие те витĕм кӳнĕ, ăна икĕ системăллă тунă, анчах орфографире 1961, 1967 тата 1992-94 сулсенче пулса иртнĕ улшăнусем алфавита тĕкĕнмен.

Чăваш çырăвĕн икĕ системăлăхне пĕтерес тесе И.А. Андреев профессор çакнашкал сĕнни пур: 1) алфавитран **б, г, д, ж, з** сас паллисене катертмелле; 2) янравлăх условисенчи хупă сасăсем иккĕллĕ (вăрăм) илтĕннĕ çĕрте пур сăмахра та икĕ хупă сас палли çырмалла (*маттематтикка, крамматтиккă, кассă, рассă, оффицер* т. ыт. те); 3) çемçен илтĕнекен [с′] сасса **ç** лартса палăртмалла (*комиççи, çиçтемă* т. ыт. те); 4) [ă], [ĕ] сасăсене **ă, ĕ** сас паллисемпе палăртмалла (*тиректăр, аттаккă, повĕç* т. ыт. те); 5) **ю, я** сас паллисене алфавитран кăлармалла; 6) **е, э** сас паллисенчен пĕрне катертмелле; 7) **щ** вырăнне **шч** çырмалла; 8) **о, ф, ц** сас паллисене тĕкĕнмелле мар. Ку сĕнӳ, И.А. Андреев хăй каланă тăрăхах, пурнăçа кĕрес сĕнӳ мар, мĕншĕн тесен чăвашсем икĕ чĕлхепе те çăмăллăн усă кураççĕ. (*Андреев И.А.* Орфография чувашского языка // Орфографии тюркских литературных языков СССР. – М.: Изд-во «Наука», 1973. – С.279–280.) Сас паллисемпе усă курнă чух йăнăш ан пултăр тесен чăваш сăмахĕсен орфографине те, вырăс орфографине те аван пĕлмелле.

И.Я. Яковлев алфавит тăвиччен профессионалсене чăваш пуплевне сăнаса чĕлхемĕрĕн фонемисене туптарнă, вĕсене палăртмалли хатĕрсене хăй сĕннĕ, алфавичĕ пурнăçа кĕтĕр тесе патшалăх шайĕнче пастановлени тавраш ниçта та йышăнтарман, орфографи словарĕ те кăларман, халăха ĕненнĕ, ĕçĕ ырра каясса шаннă, халăха тăван чĕлхепе çутта тухнин пĕлтерĕшне ăнлантарнă, шкулсем уçнă. Çаканпа çырлахнă. Алфавита, орфографи правилисене правителство шайĕнче çирĕплетес йăла И.Я. Яковлев вăхăтĕнче пулман – Совет саманинче вăй илнĕ. Тĕслĕх мĕн пулни те паллă Ку вăл – вырăс çырăвĕн 1918 çулхи реформи.

Ю.М. Виноградов, чĕлхеçĕ, филологи ăслăлăхĕн кандидачĕ, доцент, 2021.03.26